**Утма вĕренни**

Карчăк утать туяпа,
Мăнук – тăват урапа.
Пĕри кăштăр-кăштăртик,
Тепри тăпăр-тăпăртик.

Асламăшĕ ăс парать:
«Уттяь, уттяь тумалла».
Мăнукĕ çунатланать:
«Утса-сиксе чупмалла!»

Ватти калать: «Тыт манран,
Ыран хама çавăтан».
Ачи калать: «Эп хамах!»–
Утăмлать тытмасăрах.

Пĕри утать туяпа,
Тепри – икĕ урапа.
Пĕчченшерĕн – кăштăртик!
Иккĕн пĕрле – тăпăртик!

*Ишентей, Н. Утма вĕренни : [сăвă] / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 414.*